## ЫВӐЛӐМА

Пӑр ирӗлсе шыв сас парсан,
Садри саркайӑк сӑвӑллӑн
Ҫунат ҫапса юрра ярсан,
Пупле пуҫларӑн, ывӑлӑм.

Тӑван эрмен чӗлхипелен
Хушса пӗрремӗш сӑмахна,
Мӗнпур, мӗнпур питӗркӗҫрен
Эс уҫӑ илтӗн аллуна.

Ачам! Сана эп мул парап,
Тӗнчере ҫук унтан пахи,
Ӑна эс пурнӑҫ пек упра:
Вӑл — пирӗн аттесен чӗлхи.

Чӗкеҫ чӗппи пек чӗвӗлтет,
Ҫурхи шывсем пек шӑнкӑртат.
Ҫӗршывӑн чӗлхине ҫӗнет,
Ҫамрӑклантар, парсам хӑват.

Шур юр тӳпеллӗ Арарат
Мӗнле ытарайми таса —
Ҫапла тасан усра, юрат
Пиншер ҫулхи тӑван сасса.

Хавна çуратна аннӳпе
Çӗнелнӗ ирӗк çӗршывна
Вăрçа кӗрсе сыхланă пек,
Пур тăшмантан сыхла ăна.

Кирек хăçан, кирек ăçта
Кӗрсем тăван сăмах хутне.
Ху аннӳне мансассăн та,
Ан ман эс хамăр чӗлхене.